27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
ДЕКАБРЬ
13
ЮНКУН
243(6738) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Ҫамрӑксем, 1945 ҫулхи вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешӗве тухар!

Пирӗн республикӑри колхозниксемпе колхозницӑсем, пӗтӗм совет хресченӗсем пекех, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи йывӑрлӑхсене ӑнӑҫлӑн ҫӗнтерсе, вӑйлӑ тырпул ҫитӗнтерчӗҫ, ӑнса пулнӑ тырпула вӑхӑтра тата пӗр тӑкаксӑр пухса кӗртрӗҫ. Колхозниксемпе колхозницӑсем тата ялхуҫалӑхӗнче ӗҫлекен специалистсем ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлени ахаль пулмарӗ. Пирӗн колхозсем государствӑна обязательство тӑрӑх тырӑ парса татнӑ хыҫҫӑн планран иртгерсе Хӗрлӗ Ҫар фондне нумай тырпул пачӗҫ. Килес ҫул акма вӑрлӑх тата ытти тӗрлӗ фондсем хывма та, колхозниксене ӗҫкунӗ тӑрӑх валеҫсе пама та ҫителӗклӗ тырпул пулчӗ.

Тырпул акса ҫитӗнтерессишӗн тата ӑна вӑхӑтра пухса илессишӗн пынӑ хӗрӳ кӗрешӳре колхозри ҫамрӑксем хисеплӗ те чыслӑ вырӑн йышӑнчӗҫ. Республикӑри нумай колхозсенче комсомолецсемпе ҫамрӑксен вӑйлӑ тырпул звенисем, социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса, ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлерӗҫ. Социализмлӑ ӑмӑртӑва 2.247 комсомолецпа союзра тӑман ҫамрӑк хутшӑннӑ. Вӗсем сӑмахпа мар, хӑйсен паха ӗҫӗсемпе социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн вӑйне кӑтартса пачӗҫ. Пикенсе ӗҫлесен, пирӗн колхозсенче пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илме май пуррине нумай тӗслӗхсемпе ҫирӗплетрӗҫ.

Вӑрнар районӗнчи Ленин орденлӗ Сталин ячӗпе тӑракан колхозри Миронова юлташ ертсе пыракан комсомолецсемпе ҫамрӑксен звени, хӑйӗн ҫумне ҫирӗплетнӗ 6 гектар ҫӗр лаптӑкӗ ҫинче кашни гектартан 33,3 центнер урпа туса илнӗ. Ҫапла вара Миронова юлташ звени ҫамрӑксем хушшинчи социализмлӑ ӑмӑртура пӗрремӗш вырӑн йышӑнчӗ. Красноармейски районри «Красный Порденер» колхозри комсомолецсемпе ҫамрӑксем ҫуркунне кок-сагыз акса хӑварсанах пӗтӗм республикӑри комсомолецсемпе ҫамрӑксене кок-сагыз туса илессишӗн ӑмӑртӑва тухма чӗнсе ҫырчӗҫ, вӗсем хӑйсем конкретлӑ обязательствӑсем илчӗҫ. Р. Петрова, А. Егорова, Т. Трофимова юлташсем ертсе пыракан звенюсем оборона промышленноҫне кирлӗ кок-сагызшӑн кунне-ҫӗрне пӗлмесӗр ӗҫлерӗҫ, хӑйсем илнӗ обязательствӑна чыслӑн пурнӑҫларӗҫ. Трофимова юлташ ертсе пыракан звено план тӑрӑх кашни гектартан 4 центнер кок-сагыз тымарӗ илме пӑхнӑ. Социализмлӑ ӑмӑртӑвӑн итогӗсене тунӑ чух, Трофимова юлташ звени, ыттисемпе танлаштарсан, нумай мала тухни паларчӗ. Вӑл кашни гектартан 21,87 центнер кок-сагыз тымарӗ пухса илнӗ.

Вӑйлӑ тырпулшӑн пынӑ кӗрешӳре Вӑрнар районӗнчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозри П. Тереков юлташӑн звени, Вӑрнар районӗнчи «Дружба» колхозри М. Андреев звени, Шӑхасан районӗнчи Киров ячӗпе тӑракан колхозри И. Мыльников звени тата ытти нумай звеносем те лайӑх ӗҫлерӗҫ.

Ҫамрӑксем хушшинче пынӑ социализмлӑ ӑмӑртӑва МТС-сенчи ҫамрӑк трактористсемпе трактористкӑсем те анлӑн хутшӑнчӗҫ. Вӑйлӑ тырпулшӑн пыракан кӗрешӗве 23 трактор бригади, 1.044 ҫамрӑк трактористпа трактористка хутшӑннӑ. Вӗсем тракторсемпе ӗҫлемелли плана срокчен пурнӑҫлассишӗн фронтри пек ӗҫлерӗҫ. Хӑйсен планне 109 процент пурнӑҫласа, 36.963 килограмм горючи перекетлесе хӑварчӗҫ. Ҫак мухтава тивӗҫ ҫамрӑк патриотсен ӑмӑртӑвӗнче Вӑрмар МТС-ӗнчи Лукин юлташ ертсе пыракан бригада пӗрремӗш вырӑна тухрӗ. Вӑл ҫулталӑкра тракторпа ӗҫлемелли плана 180 процент тултарнӑ, 3.459 килограмм горючи перекетлесе хӑварнӑ. ВЛКСМ Обкомӗпе Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ, МТС-сенчи ҫамрӑксен трактор бригадисен 1944 ялхуҫалӑх ҫулӗнчи социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн итогӗсене пӑхса тухса, Лукин юлташ ертсе пыракан бригадӑна, ӑмӑртура пӗрремӗш вырӑн йышӑннӑскере, ВЛКСМ Обкомӗпе Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне памалла тунӑ.

Пирӗн колхозсенчи ҫамрӑк сухаҫӑсем тата МТС-сенчи ҫамрӑк трактористсемпе трактористкӑсем кӗрхи ҫӗртме тӑвас ӗҫре те лайӑх ӗҫлерӗҫ. Ҫамрӑк сухаҫӑсен ӑмӑртӑвне 5.764 ҫамрӑк хутшӑннӑ, вӗсен шутӗнче 2.645 комсомолец пулнӑ. Социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑннӑ ҫамрӑксем, кӗрхи ҫӗртме килес ҫулхи тырпул никӗсӗ пулнине асра тытса, вӑя шеллемесӗр ӗҫлерӗҫ. Вӑрмар районӗнчи «Свобода» колхозри комсомолец Т. Тимофеев юлташ, икӗ вӑкӑрпа, пӗр касӑллӑ плугпа ӗҫлесе, 31 гектар кӗрхи ҫӗртме тунӑ. Советски районри «Комбайн» колхозри ҫамрӑк колхозница Е. Александрова 50 гектар кӗрхи ҫӗртме тунӑ. Елчӗк МТС-ӗнчи ҫамрӑк тракторист Г. Ахматуллин 25 гектар вырӑнне 120 гектар кӗрхи ҫӗртме тунӑ. ВЛКСМ Обкомӗпе Чӑваш АССР Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗ ӑмӑрту условийӗсене чыслӑн пурнӑҫланӑ ҫамрӑк трактористсене Ахматуллинпа Ишлей МТС-ӗнчи трактористкӑна Семенова юлташа 500-шер тенкӗ укҫа парса премиленӗ.

Пирӗн республикӑри колхозсенчи комсомолецсемпе ҫамрӑксем вӑйлӑ тырпул туса илес тӗлӗшпе лайӑх ӗҫлерӗҫ. Халӗ ӗнтӗ 1945 ҫулхи вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешӗве тухас пулать. Ҫамрӑксен вӑйлӑ тырпул туса илес тӗлӗшпе ӗҫлекен звенисене кашни колхозрах, кашни бригадӑрах тумалла. Иртнӗ ҫулхи паха опытсемпе анлӑн усӑ курмалла. Чӑн малтанах, халӗ килес ҫулхи ҫуракине хатӗрленес тӗлӗшпе вӑйлӑн ӗҫлемелле. Ҫителӗклӗ таран вӑрлӑх уйӑрса, ӑна халех сортласа тасатас пулать. Комсомолецсемпе ҫамрӑксем вӑрлӑх тасатас ӗҫе пуҫаракансем пулмалла, вӑл ӗҫе вӑхӑтра тӑвассишӗн кӑнтӑрла та, ҫӗрле те ӗҫлемелле.

Халӗ МТС-сенче тракторсене юсас тӗлӗшпе хӗрӳ ӗҫ пырать. Малта пыракан Красноармейски, Йӗпреҫ, Шӑхасан, Вӑрнар тата ытти хӑшпӗр МТС-сем хӑйсен тракторӗсене 1945 ҫулччен юсаса пӗтерес задача лартаҫҫӗ. Красноармейски МТС коллективӗ мӗнпур тракторсемпе вӗсенчен кӑкарса ӗҫлемелли машинӑсене декабрӗн 25-мӗшӗ тӗлне юсаса пӗтерме обязательство илчӗ. Халӗ кашни МТС-рах тракторсене хӑвӑрт та лайӑх юсас тӗлӗшпе ӑмӑрту пырать. Ҫак паха та кирлӗ ӗҫе комсомолецсем пуҫарса пымалла. Мӗнпур тракторсене хавхалантарса пымалла.

Колхозсенче халӗ ҫуракинче кирлӗ пулакан машинӑсене, плугсемпе сӳресене юсас ӗҫ пырать. Колхозсенчи комсомолецсемпе ҫамрӑксем колхозри тимӗрҫӗсене куллен пулӑшса пымалла, юсанӑ машинӑсене, плугсене, сӳресене типӗ тата юр кӗмен сарайсене майласа лартмалла.

Вӑйлӑ тырпул туса илесси хире тӗрлӗ удобренисем тӑкнинчен те нумай килет. Малта пыракан колхозсем ҫӗршер, пиншер лав тислӗк кӑларнӑ ӗнтӗ. Ҫӗрпӳ районӗнчи «Ӗмӗт» колхозра кашни бригадӑрах хире тислӗк кӑларас енӗпе комсомолецсемпе ҫамрӑксем ӗҫлеҫҫӗ. Елчӗк районӗнчи «Марс» колхозра тырпул пухса кӗртнӗ хыҫҫӑн хире 5800 лав тислӗк кӑларнӑ. Ҫакӑн пек тӗслӗхсем нумай илсе кӑтартма пулать. Комсомолецсемпе ҫамрӑксен вырӑнти удобренисем—тислӗк, кӗл, кайӑк-кӗшӗк тислӗкӗ пухас тӗлӗшпе пикенерех ӗҫлемелле. Торф кӑларса хире тӑкасси, юр тытасси те ялти комсомолецсемпе ҫамрӑксен паха ӗҫӗ пулса тӑраҫҫӗ.

Колхозра ӗҫлекен хӗрарӑмсемпе ҫамрӑксем халӗ агротехникӑна вӗренмелле. Уйра ӗҫлеме пултаракан кашни колхозник тата колхозница агротехникӑна лайӑх пӗлмелле. Комсомолецсемпе ҫамрӑксем агротехникӑна вӗренес ӗҫе организацилекенсем пулмалла.

Аслӑ ҫулпуҫ Сталин юлташ пирӗн ҫамрӑксен ӗҫне пысӑка хурса хакларӗ. Ҫакӑ пире тата пикенерех кӗрешме хавхалантарать. Ялти комсомолецсемпе ҫамрӑксен халӗ пӗтӗм вӑя ҫуракине хатӗрленес ҫӗре хумалла. 1945 ялхуҫалӑх ҫулӗнче вӑйлӑ тырпул туса илессишӗн социализмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн сарса ямалла, пӗтӗм колхозлӑ яла вӑйлӑ тырпулшӑн пыракан кӗрешӗве явӑҫтармалла.

Каллех Тӑван ҫӗршывра

МИНСК, декабрӗн 11-мӗшӗ. (ТАСС). Минскри, Барановичири, Брестри тата Белорусси ССР-ӗн ытти хулисенчи ӗҫҫынниесем Белорусси гражданӗсене ӑшшӑн кӗтсе илеҫҫӗ. Ҫав ҫынсене гитлеровецсем ирӗксӗрлесе хӑваласа кайнӑ пулнӑ. Польша территорийӗнче вӗсене Хӗрлӗ Ҫар ирӗке кӑларнӑ. Фашистла каторгӑран ҫӑлӑнса тухнӑ ҫынсем хӑйсене ирӗке кӑларнӑ Хӗрлӗ Ҫара чунтан-чӗререн тав тӑваҫҫӗ. Тӑван ҫӗршыв вӗсене манманни ҫинчен хумханса калаҫҫӗ.

Вырӑнти совет органӗсем таврӑннӑ ҫынсене ӑшшӑн пӑхаҫҫӗ, вӗсемшӗн тӑрӑшаҫҫӗ, вӗсене вырнаҫтарма ҫуртсем уйӑрса панӑ, ҫӗр панӑ. Кирлисене укҫа парса пулӑшаҫҫӗ, тумтир тата куллен кирлӗ япаласем параҫҫӗ.

Тупӑ нимӗҫ танкӗсемпе кӗрешни

ҪАПАҪУРИ ҪАР, декабрӗн 12-мӗшӗ. (ТАСС спецкорӗ). Ҫапӑҫу темиҫе сехет хушши пынӑ. Гитлеровецсем пӗр ансӑр участока 11 йывӑр танк янӑ. Ҫав танксем, вӑйлӑн персе, хӑйсен пехотин атакине пулӑшса пынӑ. Ледянкин старши сержант хӑйӗн туппине курӑнмалла мар вырнаҫтарса лартнӑ. Тупӑ расчечӗ час-час пемен, вӑл тӑшман танкӗ урлӑ ҫаврӑнса тӑрассине кӗтсе тӑнӑ. Нимӗҫсен пӗр-пӗр танкӗ урлӑ ҫаврӑнса тӑрсанах, артиллеристсем ӑна пеме пуҫланӑ. Акӑ, тупӑ командирӗ пӗр «Пантера» йышши танк позицисем тӑрӑх кайнине асӑрханӑ. Туппа пӗр самантрах тӗл пемелле туса лартнӑ. Акӑ вӑл персе янӑ. Снаряд танка пырса тивнӗ. Тӑшман танкӗ чарӑннӑ.

Анчах ҫав вӑхӑтра нимӗҫсем пирӗн туппа асӑрханӑ та ун ҫине снарядсем тӑкма тытӑннӑ. Тӑшман пеме чарӑнсан, пирӗн артиллеристсем унӑн танкӗсене каллех тӗллесе пеме пуҫланӑ. Нимӗҫ танкӗсен каяллла чакмалла пулса тӑнӑ. Вара тӑшман пехоти те каялла чакнӑ. Ледянкин старши сержантӑн тупӑ расчечӗ ҫирӗп тӑни, ҫапла, пирӗн стрелоксене тӑшман атакине сирсе яма пулӑшнӑ.

Капитан С. НОРТМАН.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

Оборонӑн Государственный Комитечӗн Председательне Совет Союзӗн Маршалне СТАЛИН юлташа

Пирӗн тӑван Хӗрлӗ Ҫар ҫӗнтерӳллӗн наступлени туса пынипе хавхаланса, Кольцовкӑри Ленин орденлӗ Сталин ячӗпе тӑракан колхоз колхозникӗсемпе колхозницисем, вӑя шеллемесӗр ӗҫлесе, 1943 ҫулта, ҫанталӑк начар тӑнине пӑхмасӑрах, кашни гектартан вӑтам шутпа 100-шер пӑт тырӑ пухса кӗртрӗҫ.

1943 ҫулта пирӗн колхозниксем хӑйсем перекетлесе хӑварнӑ тырӑран 10.000 пӑт государствӑна сутрӗҫ. Государствӑн Виҫҫӗмӗш Военнӑй Заемне 310.000 тенкӗлӗх туянса, укҫине те ҫийӗнчех тӳлесе татрӗҫ.

Иртнӗ ҫулта эпӗ хамӑн перекетленӗ укҫа-тенкӗрен танксен «Колхозник Чувашии» ятлӑ колоннине тума 100.000 тенӗ патӑм тата государствӑна 80 пӑт тырӑ сутрӑм.

Кӑҫал пирӗн колхоз 617 гектар ҫӗр ҫинче вӑтамран кашни гектартан 28,32 центнер тӗштырӑ пухса илчӗ.

Сталин ячӗпе тӑракан колхоз 1944 ҫулта пухса илнӗ тырӑран государствӑна 3572 центнер пачӗ, вӑл шутран 1945 ҫулшӑн обязательнӑй поставка шучӗпе 504 центнер, натуроплата 47 центнер панӑ. Хӗрлӗ Ҫар фондне планран ирттерсе 260 центнер тырӑ панӑ.

Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ пуҫланнӑранпах эпӗ Кольцовкӑри Ленин орденлӗ Сталин ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ пулса ӗҫлетӗп. Хамӑн сывлӑх начар пулни кӑна мана Отечественнӑй вӑрҫӑ фронтӗнче пулма чӑрмантарать.

Гитлерла захватчиксене хӑвӑртрах аркатса тӑкас ӗмӗтпе ҫунса, Ферапонт Головатый колхозникӗн ырӑ примерне йышӑнса, эпӗ пӗр боевой самолет—истребитель туянма шутларӑм. Самолет илме хамӑн перекетленӗ укҫаран 100.000 тенкӗ хыврӑм.

Хам туяннӑ самолета манӑн ывӑла летчика Николай Васянина пама ирӗк ыйтатӑп.

Хаклӑ Сталин юлташ! Пирӗн аслӑ халӑхӑн телейӗшӗн нумай ҫулсем хушши ӗҫлесе пурӑнма Сире чӗререн сывлӑх сунатӑп.

Кольцовкӑри Ленин орденлӗ Сталин ячӗпе тӑракан колхоз председателӗ
А. Д. ВАСЯНИН.

Вӑрнар, Чӑваш АССР-ӗ

КОЛЬЦОВКӐРИ ЛЕНИН ОРДЕНЛӖ СТАЛИН ЯЧӖПЕ ТӐРАКАН КОЛХОЗ ПРЕДСЕДАТЕЛНЕ А. Д. ВАСЯНИНА

Хӗрлӗ Ҫарӑн сывлӑшри вӑйӗсемшӗн тӑрӑшнӑшӑн манран тӑванла салам тата Хӗрлӗ Ҫар тав тунине йышӑнӑр.

Эсир кӑмӑл туса ыйтни пурнӑҫа кӗрӗ.

И. СТАЛИН.

Трактористсен курсӗ

Ишлей МТС-ӗ ҫумӗнче трактористсен курсне организациленӗ, вӑл курсра халӗ 20 ҫын вӗренет. Январӗн 1-мӗшӗнчен пуҫласа халиччен трактор ҫинче ӗҫленӗ трактористсен пӗлӗвне ӳстермелли курс пуҫланать. Вӑл курсра 30 ҫынна вӗрентме палӑртнӑ.

1945 ҫулхи ҫуракине большевикла кӗтсе илер!

Хӗрлӗ Ялавлӑ МТС-ра

ШАХАСАН. Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ Революци 27 ҫул тултарни ҫинчен Сталин юлташ тунӑ докладпа хавхаланса, трактористсемпе трактористкӑсем хӑйсем ҫине ҫӗнӗ обязательствӑсем илчӗҫ: пӗтӗм тракторсене январӗн 1-мӗшӗ тӗлне юсаса пӗтерме пулчӗҫ.

Ҫак обязательствӑна пурнӑҫа кӗртсе, тӑваттӑмӗш кварталта 19 трактор юсанӑ, плана 119 процент тултарнӑ.

Тракторсене юсас енӗпе Ф. Григорьев, И. Филиппов, Я. Сергеев, А. Александров бригадисенчи трактористсем аван ӗҫлеҫҫӗ. И. Долгов, Е. Антонов, С. Михайлов трактористсем кулленхи нормӑна 2—3 хут тултараҫҫӗ.

Парторганизаци секретарӗ С. Мишуткин юлташ трактористсемпе рабочисем хушшинче политикӑллӑ-массӑллӑ ӗҫе лайӑх туса пырать. Каннӑ вӑхӑтра трактористсем хаҫатсем вулаҫҫӗ, Хӗрлӗ Ҫарӑн ҫӗнӗ ҫӗнтерӗвӗсемпе паллашаҫҫӗ.

Илнӗ обязательствӑсене трактористсем мӗнле пурнӑҫа кӗртсе пынине парти организацийӗ кашни кунах тӗрӗслесе тӑрать.

2-мӗш бригада (бригадирӗ Н. Тимофеев) тракторсене юсас ӗҫре юлса пыратчӗ. Вӑл бригадӑн 4 трактор юсамалла пулнӑ. Халӗ ку бригада та, тракторсене юсас ӗҫри паха опытсемпе усӑ курса, ӗҫ нормине тултарса пыма пуҫларӗ.

Тракторсене юсас ӗҫре пысӑк чӑрмавсем те пур. Канашри водосвет кашни кунах МТМ-а электроэнерги парса тӑмалла. Анчах та водосвет тракторсене юсас ӗҫпе пӗре те интересленмест. Вӑл сайра хутра кӑна МТМ-а электроэнерги парать.

Ҫак ҫитменлӗхе пӗтерсен, тракторсене юсас ӗҫ тата та ӑнӑҫлӑн пымалла.

МТС дирекцийӗ трактористсене тата рабочисене пурӑнма лайӑх условисем туса панӑ. Ӗҫлекенсем валли столовӑйра икӗ хут вӗри апат хатӗрлесе параҫҫӗ. Пӗрле пурӑнмалли ҫуртра ӑшӑ, канма ҫителӗклӗ таран вырӑн пур.

Хӗрлӗ ялавлӑ МТС коллективӗ тракторсене тата ытти ялхуҫалӑх машинисене лайӑх пахалӑхпа тата срокчен юсаса пӗтерессишӗн пӗтӗм вӑя хурса кӗрешет.

А. АНТОНОВ.

Ҫӗнӗ ҫул тӗлне пур тракторсене те юсаса пӗтеретпӗр

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. (Телефонпа). IV-мӗш кварталта тракторсем юсамалли плана эпир ӑнӑҫлӑн пурнӑҫларӑмӑр. План тӑрӑх пирӗн 16 трактор юсамаллаччӗ, эпир пурӗ 24 трактор юсанӑ. Вӗсене государство комиссийӗ лайӑх юсанӑ тесе йышӑнчӗ.

Тракторсене юсас тӗлӗшпе кӑҫал хӗрарӑмсен 8-мӗш бригади (бригадирӗ Ульяна Николаева юлташ) лайӑх ӗҫлерӗ. Вӑл хӑйӗн бригадинчи 3 трактора пӗтӗмпех лайӑх пахалӑхпа юсаса пӗтерчӗ. Ҫак бригадӑри О. Мефодьева, Т. Николаева, Ф. Сергеева трактористкӑсем кунне-ҫӗрне пӗлмесӗр ӗҫлерӗҫ. Вӗсем тракторсене кӑна мар, трактортан кӑкарса ӗҫлемелли тӗрлӗ машинӑсене те пӗтӗмпех юсаса пӗтерчӗҫ.

Я. Васильев ертсе пыракан 13-мӗш номерлӗ бригада та тракторсене юсас ӗҫре паха тӗслӗхсем кӑтартать. Ҫак бригада ноябрӗн 23-мӗшӗ тӗлнех бригадӑри пур тракторсене те тата вӗсенчен кӑкарса ӗҫлемелли машинӑсене юсаса пӗтерчӗ. Бригадӑри М. Тарасова, С. Михайлов трактористсем хӑйсен тракторӗсене юсаса пӗтернӗ хыҫҫӑн ытти трактористсене нумай пулӑшрӗҫ, халӗ те пулӑшаҫҫӗ.

Трактористсене эпир Сталин юлташ Октябрьти Социализмлӑ Аслӑ Революци 27 ҫул тултарни ҫинчен тунӑ доклада тӗплӗн ӑнлантарса панӑ, пӗрлешӳллӗ пухусенче кӑна мар, кашни трактористпа трактористкӑна уйрӑмӑн ӑнлантарса панӑ тата кашнинех Сталин юлташӑн доклачӗпе приказӗ пичетленсе тухнӑ хаҫата панӑ. Трактористсен ӗҫлес кӑмӑлӗ пысӑк. Сталин юлташӑн докладне ӗҫпе ответлес тесе, пирӗн трактористсемпе трактористкӑсем ӑмӑртса ӗҫлеме тытӑнчӗҫ. МТС-ри мӗнпур тракторсемпе вӗсенчен кӑкарса ӗҫлемелли машинӑсене декабрӗн 25-мӗшӗ тӗлне юсаса пӗтерме обязательство илчӗҫ тата малта пыракан Вӑрнар МТС-не социализмлӑ ӑмӑртӑва чӗнчӗҫ.

Пирӗн капитальнӑй ремонтпа тата 12 трактор юсамалла. Тракторсене юсас тата тӗрлӗ пайсене хатӗрлес тӗлӗшпе МТС-ӑн старши механикӗ М. К. Афанасьев тата МТМ заведующийӗ А. П. Павлов юлташсем аван ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем сахал мар рационализаторла сӗнӳсем пачӗҫ. Вӑл сӗнӳсемпе тракторсене юсас ӗҫре усӑ курнӑ.

Трактористсем пирӗн ӑшӑ та ҫутӑ общежитисенче пурӑнаҫҫӗ, вӗсене валли столовӑй организациленӗ. Трактористсемпе трактористкӑсем тата тракторсене юсас ӗҫе явӑҫтарнӑ рабочисем ирхине ирех ӗҫе тытӑнса, каҫхине 12 сехетчен ӗҫлеҫҫӗ.

А. КОНСТАНТИНОВ,
МТС директорӗ.

Тухӑҫлӑ тырпулшӑн кӗрешеҫҫӗ

КУСЛАВККА. Андреев ячӗпе тӑракан колхоз кӑҫал ялхуҫалӑх ҫулне вӗҫлес тата вӑйлӑ тырпул туса илес тӗлӗшпе районра малти вырӑна тухрӗ. Колхозниксем аванс шучӗпе ӗҫкунӗ пуҫне 1,5 килограмм тырӑ, 5 килограмм ҫӗрулми тата 1,5 килограмм пахча-ҫимӗҫ илнӗ.

Сталин юлташӑн докладне ӑнлантарса панӑ хыҫҫӑн колхозниксемпе колхозницӑсем ҫитес ҫулта тата тухӑҫлӑрах тырпул туса илме сӑмах панӑ. Халӗ вӗсем хӑйсен сӑмахне ӗҫре пурнӑҫлассишӗн кӗрешеҫҫӗ. Вӑйлӑ тырпул никӗсне хывма тытӑннӑ. Ялхуҫалӑх машинисене пурне те юсанӑ, вӑрлӑх фондне хывса ҫитернӗ. Вӑрлӑхсене сортланӑ, вӗсен шӑтаслӑхне тӗрӗслеме панӑ. Халӗ колхозниксем вырӑнти удобренисем хатӗрлеҫҫӗ, уя тислӗк кӑлараҫҫӗ.

М. ОГОРОДНИКОВ.

Паха вӑрлӑх хатӗрлемелле

Ваттисен сӑмаххи ҫапла вӗрентет: «Мӗн акатӑн, ҫавна выратӑн». Пирӗн ҫураки валли паха вӑрлӑх хатӗрлемелле, мӗншӗн тесен тырӑ мӗнле пуласси вӑрлӑхран нумай килет.

Советски районри малта пыракан колхозсем ҫакна лайӑх ӑнланса илнӗ. Элешкушкӗн, Этмен, Шуркасси, Лапракасси колхозӗсем кӗркуннех паха вӑрлӑх хывса хӑварчӗҫ.

Анчах хӑшпӗр колхозсем вӑрлӑх фончӗ хывас тӗлӗшпе ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ. Юманай, Мӑн Ямаш, Выселка, Пакӑш, Ҫиранҫырми колхозӗсем халӗ те вӑрлӑх хывса ҫитермен. Вӗсем пиркиех район вӑрлӑх хывмалли плана 71 процент анчах тултарнӑ.

Уйрӑмӑнах клевер вӑрлӑхне хывасси начар пулса пырать. Колхозсем клевер вӑрлӑхне ҫурри кӑна хатӗрленӗ. Мӑн Чураш, Уйкас Чураш, Ваҫкасси, Ҫимӗккасси, Яракасси колхозӗсем халӗ те клевер вӑрлӑхне ҫапса шӗкӗлчемен.

Хывнӑ вӑрлӑха сортласси те ҫителӗксӗр пырать-ха, хывнӑ вӑрлӑхӑн 15 процентне кӑна тасатнӑ. Улӑх-Шӑмат, Ҫӗньтинкеш колхозӗсем вӑрлӑх тасатмалли машинӑсемпе усӑ курмаҫҫӗ.

Кашни колхозӑн вӑрлӑх фончӗ хывас ӗҫе декабрӗн 15-мӗшӗччен вӗҫлемелле. Ҫитмен вӑрлӑхсене ытти колхозсемпе улӑштарса илессине йӗркелемелле. Хывнӑ вӑрлӑхсен пахалӑхне районри вӑрлӑх лабораторийӗнче тӗрӗслеттермелле.

М. ДМИТРИЕВ,
Райҫӗрӗҫ пайӗн главнӑй агрономӗ.

Сортировкӑсем ахалех тӑраҫҫӗ

СЕНТЕРВАРРИ. (Телефонпа). Районри чылай колхозсенче вӑрлӑх сортласси ӑнӑҫлӑн пырать. «Социализм», «Красная Армия», «Ҫӗнӗ ял» колхозсем вӑрлӑхсене сортласа пӗтернӗ. Ку колхозсенче вӑрлӑхлӑх пӑрҫана алӑпа суйлаҫҫӗ.

Анчах та уйрӑм колхозсенче вӑрлӑх хывасси ҫителӗксӗр пырать-ха. «Красный волгарь» колхозӑн 108 центнер тырӑ, 80 центнер ҫӗрулми ҫитмест. «Малалла» колхозӑн 20 центнер тырӑ, 112 центнер ҫӗрулми ҫитмест. Ҫак колхозсенче вӑрлӑха сортласси те ҫителӗксӗр пырать. Пӗтӗм районӗпе илсен, вӑрлӑха паянхи кун тӗлне пурӗ те 20 процент кӑна сортланӑ. «Ядро», Сталин ячӗпе тӑракан колхозсенче вӑрлӑхсене сортлама та тытӑнман. Сӗнтӗрвӑрринчи Ворошилов ячӗпе тӑракан колхозра тырӑ тасатмалли машинӑсем пур, анчах вӑрлӑх сортлас ӗҫе организацилемен.

Пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илес тесен, уя тислӗк ытларах кӑлармалла. Чылай колхозсем ҫакна лайӑх ӑнланаҫҫӗ. «Сӗнтӗрпуҫ» колхоз 1.400 лав, Чкалов ячӗпе тӑракан колхоз 420 лав, «8-ое Марта» колхоз 510 лав, Киров ячӗпе тӑракан колхоз 1.100 лав тислӗк уя кӑларнӑ.

Районра 150 плуг, 15 сеялка, 20 сӳре юсанӑ. Ялхуҫалӑх машинисене юсас ӗҫ уйрӑмӑнах «Сӗнтӗрпуҫ», «Красная Армия», «Коминтерн» тата ытти колхозсенче лайӑх пырать. Унта плугсемпе сӳресене юсаса пӗтернӗ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

ДЕКАБРӖН 11-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Декабрӗн 11-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем Венгрире МИШКОЛЦ хулинчен ҫурҫӗртерехре тата ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре, тӑшманпа ҫапӑҫса, ХАНГАЧ, БОЛДВА, ШАЙО-ЕЧЕГ, ШАЙО-КЕРЕСТУР, БАБОНИ, ПИЛТАЙ, КАПОЛНА, КОНДО, РАДИШТИАН ялӗсене тата БОЛДВА чугун ҫул станцине туртса илнӗ.

БУДАПЕШТ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата ҫурҫӗртерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ, ШУРАНИ, ВАРШАНЬ, ЕРХАЛОМ, ГОНТ, ВЕРЕШЕДЬХАЗ, САДА ялӗсене туртса илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Декабрӗн 10-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем нимӗҫсен 35 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 5 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Венгрире пирӗн ҫарсем Мишколц хулинчен ҫурҫӗртерехре тата ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре, тӑшманпа ҫапӑҫса, халӑх пурӑнакан темиҫе пункта тытса илнӗ. Пӗр чаҫри боецсем тӑшман гарнизонне аркатса тӑкнӑ та Мишколц хулинчен 12 километр ҫурҫӗртерехре ларакан Болдва чугун ҫул станцине туртса илнӗ. Пирӗн сӑртлӑ вырӑнта кӗрешекен ытти чаҫсем кун каҫиччен тӑшманӑн 200 салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсенчен 4 зенитнӑй тупӑ, 9 пулемет тата боеприпас склачӗ тытса илнӗ.

* * *

Будапешт хулинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата ҫурҫӗртерехре пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ. Пӗр соединени чаҫӗсем Ипель шывӗн сулахай хӗрринче ларакан Ерхалом тата Гонт ялӗсене туртса илнӗ. Нимӗҫсем темиҫе хутчен те контратака тунӑ, анчах та вӗсене кашнинчех каялла хӑваласа янӑ. Совет кавалерисчӗсем нимӗҫ пехотине икӗ батальона ҫити аркатса тӑкнӑ. Будапешт хулине пырса кӗмелли вырӑнсенче ҫаплах хаяр ҫапӑҫусем пынӑ. Нумай вӑхӑтлӑха тунӑ оборона сооруженийӗсемпе усӑ курса, тӑшман хытӑ хирӗҫ тӑрать. Пирӗн пехотинецсемпе танкистсем артиллери персе пулӑшнипе гитлеровецсене Будапешт хулинчен 17 километр ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре ларакан Верешедьхаз тата Сада ятлӑ тӗреклетнӗ пысӑк пунктсенчен хӑваласа кӑларнӑ.

Ҫапӑҫу хирӗнче тӑшманӑн темиҫе ҫӗр вилли выртса юлнӑ. Нимӗҫсен 22 танкне ҫунтарса янӑ е персе ҫӗмӗрнӗ. Нимӗҫсемпе венгерсен 800 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ.

* * *

Хӗвелтухӑҫ Пруссире тӑшмана хирӗҫ хутран-ситрен тупӑсемпе, пӑшалсемпе тата пулеметсемпе персе тӑнӑ. Пирӗн летчиксем, ҫумӑр ҫунине тата пӗлӗтсем питӗ аялта тӑнине пӑхмасӑрах, тӑшман ҫӗрӗ ҫинче вӗҫсе ҫӳренӗ. Тройбург тата Ликк чугун ҫул станцийӗнче пирӗн авиаци 6 паровоз, 25 чугун ҫул вагонӗ пӗтерсе тӑкнӑ, тӑшманӑн ҫар эшелонне вут тивертсе янӑ. Фронт патӗнчи ҫулсем ҫинче совет летчикӗсем нимӗҫсен 20 автомашинине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ.

Снайпер кӗҫӗн сержант Ефименко икӗ эрне хушшинче 8 нимӗҫе вӗлернӗ, Куценко кӗҫӗн сержант юлашки вӑхӑтра 10 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ. Агафонов кӗҫӗн сержант боевой охраненире тӑнӑ чухне тӑшманӑн 3 салтакне вӗлернӗ.

* * *

Остроленка хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн наблюдательсем фронт тӑрӑх нимӗҫсен пехоти куҫнине курнӑ. Пӗр соединени артиллерисчӗсем пеме пуҫланӑ та пӗр батальона ҫити гитлеровецсене сапаласа янӑ. Ҫул ҫинче вилсе тата аманса пӗтнӗ нимӗҫсем нумай выртса юлнӑ. Тепӗр участокра пирӗн разведчиксем тӑшман тӑнӑ вырӑна вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ. Совет боецӗсем 26 нимӗҫе пӗтерсе тӑкнӑ, темиҫе гитлеровеца тыткӑна илнӗ те пӗр ҫухатусӑрах хӑйсен чаҫне каялла таврӑннӑ.

* * *

Украинӑри 1-мӗш фронт участокӗсенчен пӗринче нимӗҫсен отрячӗ пирӗн боевой охраненине тапаннӑ. Охраненире пирӗн 11 боец тӑнӑ, вӗсене Белов сержант ертсе пынӑ. Пирӗн боецсем нимӗҫсен отрядне пулеметсемпе тата автоматсемпе пеме пуҫланӑ. Усӗр гитлеровецсем ҫухатусем тӳснине пӑхмасӑрах малалла утнӑ. Пирӗн боецсем вӗсем ҫине гранатӑсем вӑркӑнтарма тытӑннӑ, тӑшман отрядне пӗтӗмӗшпе тенӗ пекех пӗтерсе тӑкнӑ. Темиҫе нимӗҫ кӑна каялла тарса хӑтӑлнӑ.

* * *

Остроленка хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре нимӗҫсен 299-мӗш пехотнӑй дивизийӗнчен 4 салтак—виҫӗ француз тата пӗр поляк—Хӗрлӗ Ҫар енне куҫнӑ. Француз салтакӗсем Рюдигер Мейер, Жозеф Кеслер тата Альберт Зейфрид ҫапла каласа кӑтартнӑ: «299-мӗш дивизире темиҫе вунӑ француз, поляк тата югославсем тӑраҫҫӗ, вӗсене пурне те нимӗҫсен ҫарне вӑйпа илнӗ. Вӗсен пурин те пӗр шухӑш-кӑмӑл кӑна: мӗнле те пулин хӑвӑртрах фашистсен ҫарӗнчен хӑтӑлса, нимӗҫ мундирне хывса ывӑтасси. Май килсе тухсан, вӗсем кашниех вырӑссем енне куҫма тӑрӑшаҫҫӗ. Нимӗҫсен командованийӗ пире шанман, вӑл пирӗн хушша хӑйӗн шпионӗсене тӑратнӑ, ҫавсем пирӗнтен пӗр утӑм те аякка пӑрӑнмасӑр ҫӳренӗ. Юлашки вӑхӑтра нимӗҫ мар салтаксене малти позицирен резервра тӑракан ятарласа тунӑ подразделенисене куҫарма пуҫларӗҫ. Ҫапах та унтан та тарма пулать, анчах ку ӗҫ кунта йывӑртарах ӗнтӗ. Эпир виҫҫӗмӗр те—Страсбург хулинчи французсем, пирӗн 4-мӗш юлташ—Силезири поляк. Эпир пӗр-пӗринпе паллашни нумай пулмасть, анчах та эпир часах пӗр-пӗрне ӑнланса илтӗмӗр те вырӑссем енне каҫма калаҫса татӑлтӑмӑр. Эпир нимӗҫсене пурте пӗр пекех кураймастпӑр, алла хӗҫпӑшал илсе нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ кӗрешесшӗн».

Фронтӑн тепӗр участокӗнче Хӗрлӗ Ҫар енне Югослави ҫынни Милорад К. каҫнӑ. Гитлеровецсем нимӗҫсен ҫарне ӑна та вӑйпа илнӗ пулнӑ. Ҫав Милорад К. совет подразделени командирне тӑшман оборонин малти хӗрринче ларакан землянкӑра 4 нимӗҫ салтакӗ тӑни ҫинчен пӗлтернӗ. Вӗсене тыткӑна илме пулать, тенӗ вӑл, ку ӗҫре сире эпӗ пулӑшма хатӗр, тенӗ. Пирӗн боецсен ушкӑнӗ ҫакӑнпа пӗрле ҫав землянка патне пырса тухнӑ. Милорад К. нимӗҫсене вӗсене ҫаврӑса илни ҫинчен каланӑ. Кам хирӗҫ тӑрать, вӑл чӗррӗн ҫӑлӑнса тухаймӗ, тенӗ ҫак нимӗҫсене. Нимӗҫсем тӑваттӑшӗ те тыткӑна парӑннӑ, вӗсене пурне те хамӑр ҫарсем тӑракан вырӑна илсе килнӗ.

Совет Союзĕ тăрăх

РАДИОВЕЩАНИ 20 ÇУЛ ТУЛТАРНА

Совет Союзĕнче радиовещани ĕçне 1924 çул вĕçĕнче анлăн пуçласа янă. Çав вăхăтранпа вăл пирĕн пурнăçпа йăлана çирĕп кĕрсе вырнаçнă. Совет радиостанцийĕсем халь Совет Союзĕнчи халăхсен 70 чĕлхипе ытла тата ют çĕршывсен 28 чĕлхипе хыпарсем параççĕ. Эфирта Совет çĕршывĕн сасси пĕр чарăнмасăр янăраса тăрать. Мускаври центральнăй радиовещани хăй çеç те тĕрлĕ станцисем урлă талăкра 88 сехет хушши радио сарать. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче радио уйрăмах пысăк вырăн йышăнчĕ.

Декабрĕн 16-мĕшĕнче Мускавра Союзсен Çуртĕн Колоннăллă залĕнче совет радиовещанийĕ 20 çул тултарнă ятпа чаплă лару пулса иртет. Концерта совет искусствин чи паллă мастерĕсем хутшăнаççĕ. Ăна радиопа параççĕ. (ТАСС).

ТРЕТЬЯКОВ ГАЛЛЕРЕЙИН КОЛЛЕКЦИЙĔСЕМ МУСКАВА ÇИТНĔ

Государствăн Третьяков галлерейин мĕнпур паха коллекцийĕсене — Суриков, Репин, Серов, Рублев, Левитан тата ытти паллă художникĕсен картинисене Мускава илсе таврăннă. Вăрçă пуçлансан, çав картинăсене инçери тыла куçарнă пулнă. Кашни картинăна йывăç вăл тавра хунă, цинкран тунă цилиндр ăшне хурса, питĕрсе лартнă, сывлăш кĕмелĕх çеç шăтăксем хăварнă, вара вĕсене çиелтен металл листисем çапса çавăрнă ещĕке хунă.

Каялла илсе килнĕ фондсем хушшинче вырăссен чаплă скульпторĕсен Шубинăн, Антокольскин тата совет скульпторĕсен Мухинăн, Меркуловăн скульптура произведенийĕсем, А. Герасимов, С. Герасимов, И. Грабарь, Б. Иогансон художникĕсен картинисем пур. (ТАСС).

«ОБОРОНА СЕВАСТОПОЛЯ» ЯТЛА ПАНОРАМА МУСКАВРА

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство комитечĕн ларăвĕнче музейсене каялла хăйсен вырăнне куçарасси çинчен сӳтсе явнă. Мускава 141.000 экспонат каялла таврăннă ĕнтĕ, вĕсем Мускавпа Мускав таврашĕнчи музейсен тĕп фончĕсем пулаççĕ.

Кунсăр пуçне, Мускава Рубо ÿрнă «Оборона Севастополя» ятлă питĕ чаплă панорамăна илсе пынă. Çывăх вăхăтра Искусство комитетĕнче специалистсен канашлăвĕ пулать. Çав канашлура панорама мĕнле сыхланса юлни çинчен, ăна юсасси çинчен тата малашне мĕнле сыхласа усрасси çинчен сӳтсе яваççĕ. (ТАСС).

УКÇАПА ЯПАЛАСЕН ВИÇÇĔМĔШ ЛОТЕРЕЙИН ВЫИГРЫШĔСЕНЕ ТӲЛЕНИ

Укçапа япаласен виççĕмĕш лотерейин выигрышĕсене халăха 380 миллион тенкĕлĕх тӳленĕ. Лотерея билечĕсене илнĕ çынсем 50.000-шер тенкĕлĕх 170 ытла выигрыш, 25.000-шер тенкĕлĕх 650 выигрыш, 10.000-шер тенкĕлĕх 2.780 выигрыш илнĕ. Пирĕн çĕршыври хуласемпе ялсене выигрышсем хурса 50.000 посылкăна ярса янă.

Выигрышсене 1945 çулхи январĕн 1-мĕшĕччен тӳлеççĕ. (ТАСС).

ИРĔКЕ ТУХНĂ ЛИТВАРИ ВЫРĂНТИ ПРОМЫШЛЕННОÇĂН ÇĔНĔ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕМ

Литва ССР-ĕнчи вырăнти промышленноçăн çĕнĕ предприятийĕсем кунсеренех йышлăланса пыраççĕ. Декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 105 предприяти ĕçлеме пуçланă. Вĕсем туса кăларакан тĕрлĕ таварсен йышĕ чылай ÿсет. Фабрикăсем лайăх йышши тата тĕрленĕ сĕтел çиттисем, салфеткăсем, питшăллисем, тӳшек çиттисем, атă-пушмаксем, савăт-сапасем туса кăлараççĕ, калушсем, хĕрарăм ботисем, резина атăсем, велосипед резинисем тата ыттисем те тума вĕренеççĕ. Çывăх вăхăтрах тата 3 мамăк фабрики, 2 йĕтĕн фабрики, 2 атă-пушмак фабрики, 2 пир-авăр фабрики ĕçлеме пуçлаççĕ. (ТАСС).

Заем укçине вăхăтра пухса пĕтерер!

Пирĕн республикăри ĕççыннисем Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемне илме пысăк хаваслăхпа çыраннĕç. Ку ĕç уйрăмах колхозсенче пысăк çĕкленӳпе пулса иртрĕ. Нумай колхозниксем заем укçине çийĕнчех парса татма тăрăшрĕç. Заем укçине Красноармейски, Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Вăрмар, Çĕрпӳ, Октябрьски тата Муркаш районĕсем пĕтĕмĕшпех пухса пĕтерчĕç.

Государствăн Виççĕмĕш Военнăй Заемĕн укçине пухас ĕç ытти хăшпĕр районсенче те лайăх пырать. Акă, Шăхасан районĕ заем укçине 98.6 процент, Елчĕк—96.7 процент, Чурачăк—93.2 процент, Куславкка—92.3 процент, Калинино — 91.9 процент, Вăрнар—91.7 процент, Советски—88.8 процент тата Тăвай районĕ—88.9 процент пухнă. Çак районсем финанс планне тултарса çитермелли уйăхлăхра заем укçине пĕтĕмĕшпех пухса пĕтерсе, заем облигацийĕсене подписчиксене валеççе пама пулаççĕ.

Çав вăхăтрах заем укçине пухас тĕлĕшпе юлса пыракан районсем те чылай. Кувакино районĕ заем укçине ултă уйăх хушшинче те колхозниксем хушшинче 22.3 процент çеç пухнă. Çавăн пекех заем укçи пухмалли плана Йĕпреç районĕ—30.9 процент, Хĕрлĕ Чутай—37.8 процент, Улатăр—41.2 процент, Шăмăршă—42.8 процент, Пăрачкав—48.8 процент çеç тултарнă. Ку районсенчи нумай ялсовечĕсенче заем укçине пухас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ, укçатенкĕ пухмалли плана вăхăтра тата ытлашшипех тултарас шутпа подписчиксем хушшинче массăллă-ăнлантарулла ĕçе туса пымаççĕ.

Заем укçи пухассине финанс планне тултарса çитермелли уйăхлăхра вĕçлесе çитермелле. Заем укçине срокчен пухса пĕтерсе, паттăр Хĕрлĕ Çара çĕнĕ çĕнтерӳсем тума, фашистла нимĕç захватчикĕсене пĕтĕмĕшпех çапса аркатма пулăшар!

А. МИХАЙЛОВ.

Ялти çамрăксен шкулĕсене хакламан çĕрте

Партипе совет правительстви çамрăксене воспитани парас тата вĕсене идейăпа культура тĕлĕшĕнчен ÿссе пыма пулăшас ĕç çине яланах тимлĕн çавăрăнса пăхнă. Правительство, кăçал ялти çамрăксен шкулĕсене уçса, вăрçă пула вĕренме пăрахнă подростоксене çĕнĕрен вĕренме май туса пачĕ.

Çамрăк колхозниксем СССР Совнаркомĕ ялти çамрăксен шкулĕсене уçасси çинчен йышăннă постановление пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Республикăри çĕршер çамрăк сем, колхоз производствинчен татăлмасăр кăçхи шкулсене çӳресе, хăйсен пĕлĕвне ÿстерсе пыма кăмăлларĕç. Пĕр Элĕк районĕнче кăна ялти çамрăксен шкулĕсене вĕренме кĕме 400 çамрăк заявлени панă. Районра ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 3 шкул уçнă, çичĕ çул вĕренмелли тата вăтам шкулсем çумĕнче 7 çĕрте кăçхине вĕренмелли классем уçăлнă. Вырăс Сорменчи çичĕ çул вĕренмелли шкулта 22 çамрăк вĕренеççĕ. Çавăн пекех Мăн Вылăри, Шарыпкинăри, Чăваш Сорменчи, Юманлăхри тата ытти шкулсенче те çамрăксем вĕренĕве лайăх пуçăннă. Ку вăл райçутĕç пайĕпе ВЛКСМ райкомĕ ялти çамрăксен шкулĕсене уçас ĕçе чăнласа тытăннипе килнĕ. Вĕсем çак шкулсен заведующийĕсемпе учителĕсене вăхăтра тупса çирĕплетнĕ, вĕренӳ хатĕрĕсене çителĕклĕ таран хатĕрленĕ, хутма вутă турттарнă.

ВЛКСМ Вăрмар, Муркаш, Шăхасан райкомĕсем те ялти çамрăксен шкулне уçас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тунă. Вĕсем колхозсенче комсомолецсемпе çамрăксен пухăвĕсене ирттернĕ. Вĕсенче правительство ялти çамрăксен шкулне уçасси çинчен йышăннă постановление пурнăçа кĕртмелли мероприятисене тĕплĕн сӳтсе явнă. Комсомол организацийĕсем вĕренме тивĕçлĕ çамрăксене шута илес ĕçре райçутĕç пайне тимлĕн пулăшнă, вĕренмелли çуртсене юсанă, вутă хатĕрленĕ тата турттарнă. Вăрмар районĕн центрĕнчи вăтам шкулта кăна 51 ача вĕренет. Шăхасан районĕнчи Атнашри çичĕ çул вĕренмелли шкулта виçĕ класс организациленĕ, вĕсенче 34 çамрăк вĕренет.

Анчах та Комсомольски, Çĕмĕрле, Пăрачкав, Йĕпреç районĕсенче ку ĕç питех те сӳрĕккĕн пырать. Çак районсенчи çутĕç пайĕсемпе комсомол работникĕсем ку ĕç çине çиелтен пăхаççĕ. Çавна пула ĕнтĕ Комсомольски районра (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Степанова, райçутĕç пайĕн заведующийĕ Коновалова) çак тарана çитсе те ялти çамрăксен шкулĕсене уçман. Йĕпреç, Çĕмĕрле райçутĕç пайĕсем краççин çук сăлтавпа ялти çамрăксен шкулĕсене уçма шутламан. Калас пулать, районăн краççин илме наряд та пулнă. Апла пулсан, мĕншĕн-ха Çĕмĕрлепе Йĕпреç райçутĕç пайĕсен, райсоюзпа килĕшсе, краççин илсе пырассине организацилемелле пулман? Йĕпреç райçутĕç пайĕ паянхи куна çитсе те шкулсем валли учебниксем илсе пыман.

Колхоз çамрăкĕсене вĕрентес ĕç çине çапла çиелтен пăхнине чăтма çук. Комсомол организацийĕсемпе райçутĕç пайĕсен ялти çамрăксен шкулĕсене организацилес тата ертсе пырас ĕçе тĕпренех лайăхлатмалла.

А. АЛЕКСЕЕВ.
ВЛКСМ Обкомĕн шкулсем енĕпе ĕçлекен секретарĕн заместителĕ.

КОММУНИСТСЕМ ХĂЙСЕН ПĔЛĔВНЕ ӲСТЕРЕÇÇĔ

ЕЛЧĔК. Çĕнĕ Эйпеçри Чапаев ячĕпе тăракан колхозра кăçалччен парти организацийĕ пулман. Кăçалхи март уйăхĕнче кунта парти кандидачĕсен группине организациленĕ. Вăл кĕске вăхăт хушшинчех чылай ÿсрĕ. Кунта парти членĕн кандидатне 4 çын, ВКП(б) членне пĕр çын илнĕ. Çапла вара халĕ кунта парти членĕсем 3 çын, кандидатсем 4 çын шутланаççĕ.

Кандидат группи хăйĕн ĕçне яланах план тăрăх туса пырать. Кунта кашни членпа кандидатах уйрăм поручени панă. Çав поручени чыслăн пурнăçласа, коммунистсем хăйсене ĕçре палăртаççĕ. Вĕсем, колхоз производствинче ĕçленипе пĕрлех, бригадăсенче агитациллĕ-массăллă ĕçе туса пыраççĕ. Коммунистсем колхозниксемпе таччăн çыхăнса ĕçленипе тата тĕрĕс ертсе пынипе, кăçал колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса пычĕ. Вăхăтра авăн çапса пĕтерне. Планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне колхоз 1.200 пăт тырă, колхозниксем 1.380 пăт çĕрулми панă. Колхоз 1944 çулшăн государствăна аш-какай, сĕт-çу, çăмарта, çăм парса татнă, 1945 çулшăн 13 центнер какай, 200 килограмм çу панă. Колхозниксем те государство умĕнчи хăйсен парăмĕсене пĕтĕмĕшпех тӳлесе татнă.

Нумаях пулмасть пулнă пухура коммунистсем хăйсен политикăллă пĕлĕвне ÿстерес тĕлĕшпе тимлĕрех ĕçлеме пулчĕç. Халь вĕсем Сталин юлташ тунă доклада вĕренеççĕ тата çав доклада бригадăсенче колхозниксене ăнлантарса параççĕ.

И. ИГОЛКИН.

Сталин юлташ докладне кружокра вĕренеççĕ

Трак разъездĕнчи рабочисемпе служащисем Сталин юлташ докладне вĕренме кружок организациленĕ. Кунта нумай занятие пулса иртнĕ. Кружока çӳрекенсем занятисене лайăх хатĕрленсе пыраççĕ, занятисенче ыйтусем нумай параççĕ. Кружок руководителĕ коммунист М. Павлов юлташ ыйтусене тĕплĕн ăнлантарса парать.

Кружокра вĕренекенсем, Сталин юлташ докладне вĕреннĕ май, хăйсен ĕçне лайăхрах туса пыма пуçларĕç. Вĕсем станцире йĕркелĕхпе тасалăх тума тăрăшаççĕ. Станцине хĕле те лайăх хатĕрленĕ. Çавăншăн Хусан чугун çулĕн управленийĕ станцине иккĕмĕш номерлĕ паспорт панă, станци начальникне Павлов юлташа, стрелочниксене Кожевников, Степанов юлташсене укçа парса премиленĕ.

С. ШАДИН.

ЧУГУН ÇУЛ ВАЛЛИ ВУТА ХАТĔРЛЕСЕ ТУРТТАРМАЛЛИ IV-мĕш КВАРТАЛТИ ПЛАНА ДЕКАБРĔН 10-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН

СВОДКА

Районсем тата вăрман хатĕрлекен организацисем	Плана тултарнă (процентпа)		Мĕнле вырăн йышăнать	
	Турттарас енĕпе	Хатĕрлес енĕпе	Турттарас енĕпе	Хатĕрлес енĕпе
Куславкка	115.2	123,2	1	1
Йĕпреç	107.2	79.4	2	13
Шупашкар	105.3	110 3	3	2
Первомайски	99.6	75 3	4	14
Октябрьски	98.4	99.7	5	8
Чурачăк	91.1	80.8	6	12
Шăхасан	87.6	84 5	7	10
Сĕнтĕрвăрри	83.6	92.8	8	7
Комсомольски	83.4	71.7	9	15
Вăрнар	81.6	68 6	10	17
Хĕрлĕ Чутай	75.2	89.8	11	6
Пăрачкав	73.3	106 0	12	3
Канаш	69.0	41 5	13	25
Вăрмар	67.8	44.6	14	24
Елчĕк	67.6	60 6	15	20
Советски	67.2	63 9	16	19
Красноармейски	66.8	81,2	17	11
Муркаш	65.5	54 3	18	22
Калинино	63.2	89.6	19	9
Етĕрне	61.4	54.7	20	21
Чкаловски	60.6	97 6	21	5
Ишлей	58.3	37.6	22	2[illegible]
Çĕмĕрле	53.2	98 4	23	6
Тăвай	53,1	51,7	24	23
Çĕрпӳ	51.4	69.7	25	16
Элĕк	48.5	34 0	26	28
Сĕнтĕр	48,0	35 9	27	27
Кувакино	47,0	68,0	28	18
* * *				
Улатăр вăрман хуçалăхĕ	102,3	93,3	1	2
Кире вăрман хуçалăхĕ	98,0	65,0	2	9
Йĕпреç вăрман хуçалăхĕ	91,1	80,8	3	6
Вăрнар вăрман хуçалăхĕ	87,6	84,5	4	5
Алтышево вăрман промхозĕ	84,1	72.0	5	7
Йĕпреç вăрман промхозĕ	81,2	84,8	6	4
Вăрнар вăрман промхозĕ	73.6	90.7	7	3
Кире вăрман пункчĕ	71,3	66.5	8	8
Канаш вăрман промхозĕ	69.3	49.7	9	13
Йĕпреç участокĕ	68.5	103,3	10	1
Çĕмĕрле вăрман хуçалăхĕ	66,3	59,1	11	12
Хĕрлĕ Чутай вăрман промхозĕ	65.4	63.0	12	10
Буинск вăрман промхозĕ	61,0	61,8	13	11
Çĕмĕрле вăрман пункчĕ	49,8	48,1	14	14

Йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвне хатĕрленеççĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Районри комсомолецсемпе çамрăксем колхоз çамрăкĕсен йĕлтĕрлĕ ăмăртăвне хатĕрленме тытăнчĕç. Халĕ 52 колхозра йĕлтĕрçĕсен отделенийĕсемпе взвочĕсене организациленĕ. Вĕсене йĕлтĕрçĕсене 20—30 сехетлĕ программа тăрăх вĕрентеççĕ. Уйрăмах Чапаев ячĕпе тăракан колхозри йĕлтĕрçĕсен подразделенийĕсем ăмăртăва лайăх хатĕрленеççĕ. Комсомолец П. Белов юлташ занятисене лайăх ертсе пырать. Халĕ çамрăксем кунта йĕлтĕрпе хăвăрт çӳреме, сăртсенчен анса хăпарма вĕренеççĕ. Колхозра пурĕ 14 мăшăр йĕлтĕр хатĕрленĕ. Атнарти «Коминтерн» колхозри çамрăксем те 20—30 сехетлĕ программа тăрăх йĕлтĕрпе çӳреме вĕренеççĕ.

Йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвне лайăх хатĕрленсе ирттерес тĕлĕшпе комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем хушшинче ăмăрту пуçласа янă. ВЛКСМ райкомĕпе районри физкультурăпа спорт комитечĕ ку ĕçе тивĕçлипе ертсе пыраççĕ.

П. ТИХОНОВ.

Латвири ялсемпе хуласенчи халăх сурчĕсем

Латвири хуласемпе ялсенче 176 халăх çурчĕ уçнă. Халăх унта лекцисемпе калаçусем итлет, Отечественнăй вăрçă фрончĕсенчи ĕçсемпе паллашать, художествăллă пултарулăх каçĕсем туса ирттерет. (ТАСС).

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ декабрĕн 11-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла калать:

Декабрĕн 10-мĕшĕнче союзниксен çарĕсем Аахен хулинчен хĕвелтухăçнерехри районра малалла кайнă.

Гюртген хулинчен 3 миля çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре çапăçусем пыраççĕ. Ку районра Шафберг хулине тăшмантан тасатнă.

Саар шывĕ улăхĕнче, Диллинген хули районĕнче, тăшман пехотипе танкĕсен икĕ контратакине сирсе янă. Саарлаутерн хулинче çаплах çапăçусем пыраççĕ. Саргемюнд хули патĕнче союзниксем Саар шывĕ урлă каçнă. Саргемюнд хулин хĕвелтухăç пайĕнче нимĕçсемпе урамсенче çапăçаççĕ.

Саргемюнд хулинчен 7 миля кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Гросс Редершинген хули патне пырса тухнă. Тăшман хытă хирĕç тăнине çĕнтерсе, союзниксем Хагенау хулине кĕнĕ. Халĕ тăшманпа урамсенче çапăçаççĕ.

Вогез тăвĕсем çинче Кольмар хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем каштах малалла куçнă. Унтан кăнтăр-тарахра Танн хулине тăшмантан тасатнă.

Декабрĕн 10-мĕшĕнче истребитель-бомбардировщиксем Çурçĕр Голландипе Хĕвелтухăç Голландири, çавăн пекех тата Германири транспорт объекчĕсене пырапыра çапнă.

ЛОНДОН, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ декабрĕн 11-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла калать:

Италире 8-мĕш армин чăçĕсем тăшманпа Фаэнца хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре хаяррăн çапăçнă. 5-мĕш арми секторĕнче патрульсем вăйлă кĕрешнĕ. Союзниксен çарĕсем йышăнса тăракан позицисенче паллă улшăнусемех пулман.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕ 2.100 вĕçеве яхăн тунă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, американецсен 600 бомбардировщикĕ, 800 истребитель хӳтĕлесе пынипе, Франкфурт, Ханау тата Гисен хулисенчи чугун çул депоĕсене тапăннă.

Англи бомбардировщикĕсем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, Остерфельд хулинчи сортировка станцийĕпе бензол заводне тата Мейдерихпа Брюкхаузен хулисенчи бензол завочĕсене тапăннă.

Югославири çапăçусем

БЕЛГРАД, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Югослави халăхĕн ирĕклĕх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Черногорипе Санджакра Мойковаца тата Матешево районĕнче çаплах хаяр çапăçусем пыраççĕ. Унта нимĕçсем, хăйсене çавăрса илнĕ ункăран Колашин еннелле татса тухас тесе, хăйсен мĕнпур чăçĕсене çапăçăва кĕртсе яраççĕ, анчах та вĕсен ĕçĕ ăнăçмасть.

Герцеговинăра нимĕçсем Мостар хулинчен тухса тапăннине Югослави чăçĕсем сирсе янă. Босна шывĕ улăхĕнче Югослави чăçĕсем нимĕç чăçĕсем çурçĕрелле чакакан çулсене нумай тĕлте каллех пăснă.

Çĕмĕрсе тăкнă нимĕçсене хăваласа пырса, Югослави чăçĕсем Банья-Лука хулине вăркăнса кĕрсе кайнă, халь çав хулара çапăçаççĕ.

Ликăра икĕ кун хушши çапăçнă хыççăн Югослави чăçĕсем Зрмања, Свята Троица тата Отрич хулисене штурмласа тытса илнĕ. Аркатса тăкнă нимĕç чăçĕсем Грачан хули еннелле чакаççĕ.

ТИНĔСРИ ВĂРÇĂ ÇИНЧЕН АНГЛИПЕ АМЕРИКА ПĔРЛЕ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, тинĕсри вăрçă çинчен Черчилльпе Рузвельт пĕрле пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла калать:

«Союзниксен подводнăй лодкăсем путарнă суднисен хисепĕ каллех питĕ пĕчĕккĕ пулнă, шыва путарнă подводнăй лодкăсен хисепĕ çителĕклĕ пысăк пулнă».

Пĕлтерӳре çапла калать: «Тăшман çапăçма чарăнман. Вăл подводнăй лодкăсенче çĕнĕ йышши хатĕрсем, сăмахран, сывлăша лайăххрах тасатакан хатĕрсем туса лартнă. Сывлăша лайăххрах тасатни подводнăй лодкăсене шыв айĕнче нумай вăхăт хушши çӳреме май парать. Çавна пула вара подводнăй лодкăсем виçĕ çул каялла çитме пултарайман районсене те çитсе кĕреççĕ. Подводнăй лодкăсем тума чарăннă тесе калана сăмаха нимĕçсем сарнă пулмалла, вăл суя сăмах».

Совет Союзĕпе Франци договорĕ çинчен Америка хаçачĕсем мĕн çыраççĕ

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Нью-Йоркра ирхине тухнă хаçатсем Совет Союзĕпе Франци договор туни çинчен калакан пĕлтерӳсене курăнмалли вырăнсенче пичетленĕ. «Нью-Йорк таймс» хаçат çав договор çинчен пĕлтернине пысăк заголовок парса пичетленĕ: «Франципе Совет Союзĕ пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен договор тунă. Де Голльпе тунă договор Англипе Совет Союзĕ тунă договорпа пĕр пекех». «Нью-Йорк таймс» тата «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатсем Совет Союзĕпе Франци пĕрле пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Телеграф агентствисен Мускаври корреспонденчĕсем, çавăн пекех тата «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Мускаври корреспонденчĕ çакна палăртаççĕ: Франципе Совет Союзĕ пĕр-пĕринпе калаçни çинчен Англипе Америка представителĕсем лайăх пĕлсе тăнă, теççĕ. Корреспондентсем калана тăрăх, Франципе Совет Союзĕн пĕлтерĕвĕ çакна кăтартса парать: çав договор вăл вăрçă вăхăтĕнче çеç мар, вăрçă хыççăн та, агресси тума парас мар тесе, пĕрпĕринпе килĕштерсе ĕçлесси çинчен калать.

ПЕРЕМИРИ КИЛĔШĔВĔН 4-МĔШ СТАТЬИНЕ ФИНЛЯНДИ ПУРНĂÇА КĔРТНИ ÇИНЧЕН

ХЕЛЬСИНКИ, декабрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Перемири килĕшĕвĕн 4-мĕш статьи тăрăх, Финлянди хăйĕн çарне перемири килĕшĕвне алă пуснă хыççăн икĕ уйăх çурă хушшинче мирлĕ условисене куçармалла пулнă.

Финляндин оборона министрĕ генерал-лейтенант Вяйне Вяльве Союзниксен Контроль Комиссине тăратнă докладран çакă курăнать: Финлянди перемири килĕшĕвĕн çав статьипе килĕшӳре кăтартнă срокра пурнăçа кĕртнĕ. Финлянди çарне демобилизацилес ĕçе Союзниксен Финляндири Контроль Комиссийĕ тĕрĕслесе тăнă. Финлянди командованийĕ ăна Финляндин хĕçпăшаллă вăйĕсем çинчен çителĕклĕ таран пĕлтерсе тăнă.

Хальхи вăхăтра Финлянди çарне мирлĕ вăхăтри хисеп таран чакарнă.

ИТАЛИРЕ ФАШИСТЛА ПРЕСТУПНИКСЕНЕ СУД ТĂВАССИ

РИМ, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Фашистла преступленисене наказани парас ĕçе пăхса тăракан верховнăй комиссариат Италин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕн фашистла заместителĕ пулса ĕçленĕ Фульвио Сувича тата Марио Роатта генерала ытти çынсемпе пĕрле суда пама верховнăй суда материалсем янă. Çав çынсене çывăх вăхăтрах суд тăваççĕ. Верховнăй комиссариат судра çак икĕ ĕçе пĕрле пăхса тухма хушать.

ФРАНКО ГИТЛЕРĂН ИСПАНИЕ ТАРНĂ САЛТАКĔСЕМПЕ ОФИЦЕРĔСЕНЕ ПУЛĂШАТЬ

ПАРИЖ, декабрĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, Франко влаçĕсем Германин Испание тарнă салтакĕсемпе офицерĕсене халь те пулăшаççĕ. Пĕтĕм тĕнчери правăсемпе йăласем тăрăх, çав салтаксемпе офицерсене лагерьсенче усрамалла. Анчах та Франко влаçĕсем çав правăсемпе йăласене пăсаççĕ, вĕсем гитлеровецсене тĕрлĕ майпа пулăшаççĕ. Нимĕçсен Испани чикки урлă каçакан çар çынниcене Германин Мадридри посольствин чиновникĕсем кĕтсе илеççĕ. Вĕсем çав нимĕçсене укçа параççĕ тата ахаль çынсен тумтирне тăхăнтараççĕ те Барселона хулине яраççĕ. Унта вара вĕсене гостиницăсене вырнаçтараççĕ.

ГРЕЦИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

ЛОНДОН, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио калана тăрăх, Афинăра çапла пĕлтернĕ: Афины хулине Англи çарĕсене пулăшма çĕнĕ вăйсем янă. Партизансен çĕнĕ вăйĕсем хулана кĕрсе кайнă. Лондонри радио корреспонденчĕ çапла калать: хулара партизансем халь 10—15 пин çын шутланаççĕ. Афины тулашĕнчи тусем çинче тата çавăн чухлĕ партизан пур, тет.

Енер каçхине тата çĕрле столицăра лăпкăрах пулнă пулин те, темиçе вăйлă взрыв илтĕннĕ. Университет районĕнче пăшалсемпе пенĕ. Паян тул çутăлса килнĕ вăхăтра Англи çарĕсем хĕвелтухăç енче Афинăпа юнашар ларакан ялти пасар районне партизансенчен тасатма пуçланă.

ЛĂПКĂ ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Лейте утравĕ çинче (вăл Филиппин утравĕсен шутне кĕрет) Американецсен 77-мĕш дивизийĕн чăçĕсем Ормок хулине туртса илнĕ.

7-мĕш дивизи чăçĕсем Япони çарĕсене çаплах çурçĕр еннелле хĕссе пынă. Бурауэн хулипе Альбуэра хули хушшинчи çултан хĕвеланăçнерехре кĕрешекен Америка çарĕсем 7-мĕш дивизи чăçĕсемпе пĕрлешнĕ.

АНГЛИРИ ЛЕЙБОРИСТСЕН ПАРТИЙĔН КОНФЕРЕНЦИЙĔ УÇĂЛНИ

ЛОНДОН, декабрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян Лондонра Англири лейбористсен партийĕн конференцийĕ уçăлнă. Конференцире 1.000 делегат ытла. Парти председателĕ Эллен Уилкинсон ячĕпе (вăл халь чирлĕ) конференцие партин вице-председателĕ Гарольд Ласки уçнă. Лейбористсен партийĕн задачисем çинчен Ласки çапла калана: лейбористсен задачи—«Европăра тăшмана пĕтĕмпех çĕнтеричченех» Черчилле пулăшса тăрасси пулать, тенĕ. Англи парламентне суйлана чухне лейбористсен партийĕ мандат илме тăрăшĕ, тенĕ Ласки.

Ласки умсăмах калана хыççăн конференцире çапла пĕлтернĕ: лейбористсен партийĕн исполкомĕ Грецири лару-тăру пирки чрезвычайнăй резолюци çырма пухăнать, тенĕ. Çав резолюцие сӳтсе явма конференцие тăратаççĕ.

Хаçатра пичетленсе тухнă материалсем тăрăх

Кăçал ноябрĕн 12-мĕшĕнче пирĕн хаçатра «Кино кăтартассине хăçан лайăхлатĕç-ши» ятлă заметка пичетленсе тухрĕ. Çав заметкăра Вăрнар районĕнчи кинофикаци отделĕн начальникĕ Смирнов юлташ кино кăтартас ĕçри çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе нимĕн те туманни çинчен, çавăн пирки район центрĕнчи клубра кино кăтартасси япăхланса кайни çинчен çырнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи кинофикаци управленийĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, заметкăра çырнă фактсем тĕрĕс пулнă. Вăрнар районĕнчи кинофикаци отделĕн начальникĕ пулса ĕçленĕ Смирнов юлташа кино ĕçне çителĕксĕр ертсе пынăшăн ĕçрен кăларнă.

Колхозсен финанс хуçалăхне лайăхлатар

Пирĕн республикăри колхозсем вăрçă çулĕсенче хăйсен укçа-тенкĕ тупăшĕсене чылай ÿстерчĕç. 1940 çулта республикăри колхозсен тупăшĕсем 78.060.5 пин тенкĕ пулнă пулсан, 1943 çулта вара 218.972 пин тенкĕ пулнă. Колхозсен тупăшĕсем çавăн пек ÿссе пыни колхозсенче отчетпа учет ĕçне лайăхлатма, ревизи комиссисен ĕçне вăйлатма, финанс хуçалăхĕ пирки ялхуçалăх артелĕн уставĕнче кăтартса панисене çирĕппĕн пăхăнса ĕçлеме хушать.

Анчах та республикăри чылай колхозсенче финанс хуçалăхне тивĕçлипе йĕркелесе пымаççĕ-ха. Виççĕмĕш кварталта республикăри 246 колхозăн финанс хуçалăхне тĕрĕслесе тухнă. Çавăн чухне вара нумай колхозсенче финанс дисциплинине пăснине палăртнă. Хăшпĕр колхозсем колхоз кассине кĕнĕ укçа-тенке государство банкне вăхăтра е пĕтĕмпех хывмаççĕ. Сĕнтĕр районĕнчи «Аврора» колхозра çăм тапнăшăн илекен укçа тăватă кун хушшинче 5 пин тенкĕ пухăннă. Ялхуçалăх артелĕн уставĕ тăрăх, çав укçана государство банкне хывмалла пулнă. Анчах çавăн пек туман. Колхоз çав укçана хăйĕн кассинчех тытса тăнă. Колхозăн тупăшĕсем 9 уйăх хушшинче 86.800 тенкĕ чухлĕ пулнă. Çав укçана та государство банкне хывмасăрах расходласа пĕтернĕ.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Заветы Ленина», Сĕнтĕр районĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан колхозсем кăçал хăйсен тупăшĕсене государство банкне пачах та хывман. Тупăшсене государство банкне хывмасăрах расходлани колхоз укçи-тенкине салатса пĕтерме май парать. Çапла, Октябрьски районри «Красная Чувашия» колхозра учетпа отчет ĕçне пĕтĕмпех япăхтарса янă. Çавăнпа усă курса, колхоз казначейĕ колхоз укçине хăй çумне илме пуçланă. Ревизи палăртнă тăрăх, унта 5 пин тенкĕ салатса пĕтернĕ. Колхоз правленийĕ колхоз туяннă заемсен облигацийĕсене те шута илсе пыман. Çапла вара 7 пин тенкĕлĕх облигацисене çухатса пĕтернĕ.

Хăшпĕр колхозсенче тӳлевсен дисциплинине пăсни те пулнă. Вăрмар районĕнчи Кавалти колхоз «Универсал» артеле извесшĕн 10.400 тенкĕ, Çĕмĕрле районĕнчи «Большевик» колхоз Тăванти ялпона таварсемшĕн 12.400 тенкĕ укçан тӳленĕ, банк урлă расчет тăвас йĕркене пăснă. Хăшпĕр районсенчи финанс агенчĕсем подоходнăй налог тӳлеме колхозсенчен укçа илни те пулнă. Канаш районĕнчи Крупская ячĕпе тăракан колхоз подоходнăй налогшăн 4 100 тенкĕ тӳленĕ.

СССР Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, колхозсен укçине колхозниксене аванс шучĕпе пама чарнă пулин те, чылай колхозсенче колхозниксемшĕн налогсем, заем укçи тӳлеççĕ. Сĕнтĕр районĕнчи «Красное Знамя» колхоз колхозниксемшĕн заем укçине 35 пин тенкĕ, Красноармейски районри «Большевик» колхоз 80 пин тенкĕ тӳленĕ. Канаш районĕнчи колхозсем укçапа япаласен лотерейин укçине колхозниксемшĕн 56 пин тенкĕ хывнă.

Колхозсенчи ревизи комиссийĕсем те тивĕçлипе ĕçлемеççĕ-ха. Октябрьски районри 8 колхозра ку тарана çитсе те 1943 çулшăн ревизисем туман. Канаш районĕнче кăçал малтанхи çурçул хушшинче пурĕ те 4 колхозра кăна ревизи тунă. Чылай колхозсенче кашни кварталтах ревизи тăвас вырăнне çулталăкра пĕр хутчен кăна ревизи тăваççĕ.

Колхозсен финанс хуçалăхĕнче пулакан çитменлĕхсем, пуринчен ытла, колхоз руководителĕсем финанс дисциплинине çирĕппĕн пăхăнманнинчен тата районри организацисем, уйрăмăнах çĕрĕç пайĕсем, финанс ыйтăвĕпе çителĕксĕр ĕçленинчен килеççĕ. Канаш, Комсомольски районсенчи хăшпĕр колхозсенче счетоводсем çук. Анчах та вăл районсенче счетоводсене тупса лартас ĕç çине çителĕксĕр çавăрăнса пăхаççĕ. Ревизи комиссисен ĕçĕсене лайăхлатас тĕлĕшпе те чылай çĕрте çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха.

Колхозсен финанс хуçалăхĕнчи çитменлĕхсене çывăх вăхăтрах пĕтерме тата вăл ĕçе лайăх йĕркелесе пыма пирĕн условисем кирлĕ таранах пур. Колхоз руководителĕсемпе çĕрĕç органĕсем тата партипе совет организацийĕсем колхозсен хуçалăхĕнче большевикла йĕркелĕх тăвассишĕн тимлĕн тăрăшсан, вăл ĕçе çывăх вăхăтрах лайăхлатма пулать.

Колхозсен финанс хуçалăхне лайăхлатасси учетпа отчет ĕçĕнчен нумай килет. Çавăнпа та çĕрĕç органĕсем учетпа отчет ĕçĕн хăшпĕр ыйтăвĕсене тепĕр хут пăхса тухма тивĕçлĕ. Сăмахран, ялхуçалăх артелĕн уставĕ тăрăх, колхоз казначейĕн ĕçне колхоз председателĕ туса пырать. Юлашки çулсенче колхозсем хуçалăх тĕлĕшĕнчен пĕрмай тĕрекленсе пыраççĕ. Çавна май колхоз председателĕн ĕçĕ те нумайланать. Çавăн пирки вара вăл казначей ĕçне ăнăçлăн туса пыраймасть. Казначей ĕçне кам çине хурасси пирки ыйтăва халтерех татса памалла.

Çулталăк вĕçленсе пырать. Халĕ ĕнтĕ колхозсен çулталăк хушшинчи ĕç итогĕсене тума хатĕрленмелле. Анчах та Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ колхозсен çулталăкри отчечĕсене вăхăтра тăвас ĕçе тивĕçлипе пуçарса пымасть-ха. Наркоматра колхозсен финанс хуçалăхĕшĕн ответлă пулса тăракан инструктор-бухгалтер та çук-ха.

Колхозсен укçа-тенкĕ хуçалăхне лайăх йĕркелени, финанс дисциплинине çирĕппĕн пăхăнса ĕçлени государствăпа колхозсемшĕн кирлĕ те пысăк ĕç пулса тăрать. Çавăнпа та пирĕн финанс хуçалăхне пур майсемпе те лайăхлатса пымалла.

И. ФИЛИППОВ.
Государство банкĕн Чăваш республикинчи конторин управляющийĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Халь уçăлакан электротехника техникумне çакăн пек работниксем кирлĕ: техникум секретарĕ, вĕренӳ пайĕн секретарĕ, комендант, бухгалтер, агент-кладовщик, истопниксемпе уборщицăсем, гардеробщиксем, дворник.

Ĕçукçи — килĕшнĕ тăрăх. Комендантa, дворнике тата истопнике хваттер параççĕ. Техникумра ĕçлекенсем столовăйра апатланаççĕ тата вĕсене завод магазинĕ çумне çирĕплетеççĕ.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, ул. К. Маркса, 82.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 04238 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. б. 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.